
Yandex.ru сайтран.

# ЯЛТИ БИЗНЕС

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Елена Порфирьева

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Аçу-аннӳн ани-çаранне ан ман е Ялта бизнеса епле аталантармалла?



**Бизнес – тупăш паракан ĕç-хĕл. Анчах та чылайăшĕн тӳрех ыйту çуралать: яллă тăрăхра бизнеса аталантарни çемье бюджетне ӳстерме пулăшать-и? Малтанах татăклăн хурав паракансем сахалрах пулĕç-ха. Ялта çуралса ӳснĕ çынсем ытларах та ытларах хуланалла туртăнма пуçлани сисчĕвлентерекен пулăм. Çамрăксем те, ав, диплом илсенех çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне саланаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хальхи Раççейĕн çивĕч социаллă-экономика ыйтăвĕсенчен пĕри – ялсем пĕтсе пыни, кил-çурт пушанса юлни. Юлашки икĕ çулхи кăтартусем тăрăх, виçĕ районта, çав шутра Вăрнар тăрăхĕнче те, миграци юхăмĕ вăй илни паллă. Вăйпитти халăх пысăк хуласенче тĕпленме тăрăшать, тупăш тата тивĕçлĕ шалу унта кăна ĕçлесе илме май пур тесе çирĕплетет. Ку шухăшпа килĕшес килмест, мĕншĕн тесен районта пуçаруллă, мал ĕмĕтлĕ, ыră тĕслĕх кăтартакан çынсем пурпĕрех сахал мар.**



**Денис АВАКУМОВ, çамрăк фермер:**

– Яллă тăрăхра тăрăшни те тупăш илме пулăшать. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр тенине яланах асра тытмалла. Эпĕ атте сĕнӳ панипе тăватă çул каялла пĕр шикленмесĕрех бизнес ĕçне кӳлĕнтĕм. Фермер хуçалăхне йĕркелерĕм. Патшалăх пулăшăвне тивĕçни кăмăла çĕклерĕ. Грант укçи-тенкипе çемье фермине çĕклеме, кирлĕ техника, оборудовани туянма пултартăмăр. Хальхи вăхăтра хуçалăхра мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх 65 пуç, çав шутра 25-шĕ – ĕнесем. Малашлăхра выльăх-чĕрлĕх йышне тата ӳстересшĕн.

### Юнашарах вĕсем – маттуррисем

Кил хуçалăхĕсене, фермер хуçалăхĕсене аталантарас тесе хĕлĕн-çăвĕн тăрăшакансем хисепе тивĕçлĕ. Хастарсене ятран асăнарха: Ярмушкари Инга Балыкова, Çавалкасри Александр Аврамов, Уйкас Кипекри ашшĕпе ывăлĕ Виталипе Александр Яковлевсем, Отиккăвăри Еленăпа Алексей Фадеевсем, Чалăм Кăкшăмри Алексей Лукин, Утарти Лариса Федорова, Çĕн Кипекри Николай Данилов, Уравăшри Денис Авакумов, Мăн Явăшри Леонид Иванов... Хресченфермер хуçалăхĕсенче мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх 743 пуç тытаççĕ, çав шутра 365 ĕне. «Сĕт сутнипе кассăна кунне 25 пин тенкĕ енне кĕрет, – терĕ хресченсенчен пĕри. – Тепĕр ĕçре уйăхне 20 пин тенкĕ те ĕçлесе илейместĕн. Райцентра çӳресе тата укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ тăкакланать».

Анчах та ял бизнесĕ вăл мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетесси кăна мар. Çирĕп тĕллев, пуçаруллă тăрăшас кăмăл пур-тăк, яллă тăрăхра предпринимательлĕх ĕçĕ-хĕлĕн ытти енĕпе те тухăçлă тимлеме пулать: ăратлă лаша, сурăх-качака, кайăк-кĕшĕк, хурт-хăмăр ĕрчетесси, калчасем, пахчаçимĕç, улма-çырла, чечексем çитĕнтересси, сĕт тата аш-пăш туса илесси тата ытти те.

Бизнес вăл производствăна аталантарни кăна-и? Паллах, çук. Яллă тăрăхра пурăнакансен пурнăçне хăтлăх кĕртессипе тимлени те: хапха, сетка-рабица, пластик кантăк лартассипе, çăлсем чаваснпе тата ытти строительство ĕçĕсемпе тăрăшасси, лавккасем уçасси, агротуризма аталантарасси... Акă, сăмахран, Мăньял Хапăсри уйрăм предприниматель Владимир Тикинев вăрнарсене кăна мар, кӳршĕ районсене те стройматериалсемпе тивĕçтерет. Тавара кил умнех кӳрсе парать. Транспорт шыраса хăшкăлас çук.

Хăшпĕрисем бьюти-индустрире те ăнăçлă ĕçлеççĕ. Маникюр, педикюр, косметолог, парикмахер тата çак сферăри ытти специалист тивĕçтерĕвĕсемсĕр уйрăмах этемлĕхĕн черченкĕ çурри хăйĕн пурнăçне курмасть. Бьюти-индустрире тимлекенсем çĕнĕрен те çĕнĕ технологисене алла илеççĕ.

Шел те, çăматă йăвалакансем юлманпа пĕрех. Аслă ăрурисем пурнăçран уйрăлса пыраççĕ. Вĕсенчен вĕренсе юлнисем вара шутлă кăна. Хĕлле кĕçнерникунхи пасара пирĕнпе кӳршĕллĕ Канаш районĕнчен çăматă сутма килнĕччĕ. «Сире кирлĕ размер çук. Тавара ирирех сутрăмăр, саккас парăр», – терĕ кĕрнеклĕ арçын. Чăн-чăн ăстаçăсем йăвалană çăматăсене хăвăртах туянаççĕ. Тепĕр темиçе çултан çак маçтăрсем пулĕç-ши?

Яллă тăрăхра пурăнаканăн ӳркенес, кăткăс лару-тăру умĕнче ал усас çук. Акă, Калинино ял поселенийĕнчи Юрий Андреев, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тĕллевлĕ тăрăшаканскер, Мордва Республикинчен ăратлă качака туянса килнĕ. Çапла майпа вăл кĕтĕве çĕнетме шутлать. Тăрăшаканăн тупăшĕ те пулать.

Хушма хуçалăхсене тĕреклетессипе тимлекен хастарсем – ял тăрăхĕн мăнаçĕ. «Вăрманкасри Надеждăпа Владимир Зайцевсем, Петр Сергеев, Александр Козлов, Любовь тата Владимир Чугуновсем – маттурсем. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе чылай çул тухăçлă ĕçлеççĕ», – палăртрĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Иван Афанасьев.

### Пĕлĕве ӳстеретĕн – тупăшлă ĕçлетĕн

Иртнĕ çул республикăра «Фермер шкулĕ» проект старт илчĕ. Фермер ĕçне пуçăнакансем пĕлĕве тарăнлатнă. Самана таппинчен юлманни, бизнеса тĕрĕс тытса пыма вĕренни пахчаçимĕç çитĕнтерекенсемшĕн те, выльăх-чĕрлĕх тытакансемшĕн те усăллă. Проект хăйсен кун-çулне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă е çыхăнтарас ĕмĕтлĕ çынсене пысăк тĕрев парать, утăм хыççăн утăм тума хавхалантарать. Ĕç хастарĕсем чĕртавара сутса халăха, уйрăмах хулара тĕпленнисене, экологи тĕлĕшĕнчен таса продукципе тивĕçтереççĕ. Каласа хăвармалла, асăннă проект пурнăçа кĕтĕр тесе республикăри Ял хуçалăх министерстви, Раççей ял хуçалăх банкĕ, Шупашкарти аграри университечĕ тăрăшнă. Фермер шкулĕнче пуçаруллисем кăçал та пĕлĕве ӳстерме пултарĕç. Вĕрентӳ программине хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ.

### Пуçаруллă утăмшăн – грант

Пĕчĕк формăллă хуçалăхсене патшалăх тĕревĕ те кирлех. «Çемье ферми», «Агростап», «Перспектива» программăсене пурнăçлама хутшăнса грант çĕнсе илме пулать. Палăртнă суммăна пысăк балл пухнисем тивĕçĕç. Пĕлтĕр сыр хатĕрлессипе, çырла туса илессипе, теплицăра пахчаçимĕç çитĕнтерессипе тимлекенсене республика бюджетĕнчен пулăшма йышăннă. ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов палăртнă тăрăх, тырпула пĕр гектарта çитĕнтерни 60 пин тенкĕ тупăш кӳрет, çав лаптăкранах туса илнĕ çырла вара кĕсьене 10 миллион тенкĕлĕх хулăмлатать иккен. Пуçаруллă утăм туни питех те пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш ен пĕвесемпе пуян. Ахальтен мар «Аквакультура» программăна ĕçе кĕртнĕ. Пулă ĕрчетекен хуçалăхсене курăмлă пулăшу кĕтĕ.

Чăваш Республикин «Агро-Инновацисем» предприятийĕн ертӳçи Николай Васильев çирĕплетнĕ тăрăх, маларах конкурс витĕр тухайманнисем бизнес-плана йĕркелесе çитерсен патшалăх пулăшăвĕпе усă кураяççĕ.

«Самозанятость» программăна хутшăнакансем пулăшу курăмлă пулнине тӳрех туйса илĕç. Ĕне е качака туянсан 70 пин тенкĕ таран тавăрса параççĕ. Çавăн пекех техника, оборудовани илнĕшĕн тăкакăн 40 процентне саплаштараççĕ.

Асăрхăр: субсиди уйăрмалли йĕркесем çĕнелсех пыраççĕ. Нумаях пулмасть çемье фермисене памалли грант виçине патшалăх самаях ӳстернĕ. Енчен те мăйракаллă шултра выльăх ферми пур-тăк, пулăшăва 15 миллион тенкĕ таранах тивĕçме пулать. Ытти выльăх-чĕрлĕхе тытакансемшĕн грант виçи 5 миллионран 7 миллион тенкĕ таран пысăкланнă.

### Пирĕн пуласлăх хамăртах

Тĕрлĕ санкцисем кĕртни малалла ăнтăлмалли çул-йĕрсене уçать. Ял бизнесне аталантарни импорта хамăр таварпа улăштарма пулăшĕ. Кăçал пахчаçимĕç вăрлăхне туянакансем уйрăмах йышлăрах пулнине палăртаççĕ сутуçăсем. Ара лавккари хаксем самаях шăла çырттараççĕ. Пуçлă сухан, акă, 50,1 процент, пуçлă купăста 39,8 процент ӳснĕ. Çĕр ĕçченĕсем продукцие ытларах туса илсе, ăна тупăшлă вырнаçтарса çемье бюджетне ӳстерме ĕмĕтленеççĕ. Тен, акăнманлартăнман лаптăксем те сахалланĕç. Тăлăххăн курăнакан пушă пӳртсен шучĕ те чакĕ. Хулара (е район центрĕнче) пурăнакан, тĕп киле маннăскер, тăван тăрăха таврăнса пахча-анкартире çемйипе çанă тавăрсах ĕçлессе шанас килет. «Аçу-аннӳн ани-çаранне ан ман», – тенĕ ваттисем.

Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви кашни çулах калем ăстисем хушшинче социаллă пĕлтерĕшлĕ проектсен конкурсне ирттерет. «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцийĕнче тăрăшакансем те унта кашни çулах хутшăнаççĕ. Кăçал икĕ проекчĕ конкурсра палăрнă. «Ялти бизнес» проекта пурнăçласа эпир яллă тăрăхра тăрăшакансене хисеплетпĕр. Харпăр хăй ĕçне кӳлĕнни тупăш та, чун киленĕçĕ те кӳнине яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç çирĕп ăнлантăр. Çавăн пекех «Кĕçĕн тата пĕчĕк предпринимательство» нацпроекта пурнăçлассипе епле тăрăшни пирки те çырăпăр. Ял бизнесне йĕркелесе тухăçлă тытса пыракансен йышĕ ӳсессе шанас килет.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Анлă сăнав: малтанхи кăтартусем

**Иртнĕ çул Раççейре кĕçĕн тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен 2020 çулхи ĕç-хĕлĕ тĕлĕшпе анлă статистика сăнавĕ ирттернĕччĕ. Ун малтанхи кăтартăвĕсем пирки Чăвашстат ертӳçин заместителĕпе Любовь ПЕТРОВАПА калаçатпăр.**

**– Экономика переписьне ирттерме мĕн хистенĕ-ха?**

– Тĕп тĕллев – çĕршыври кĕçĕн тата вăтам бизнес тĕлĕшпе лару-тăрăва тĕрĕс те туллин палăртасси. Çакă экономикăн приоритетлă секторĕн малашнехи çул-йĕрĕсене палăртма май парать.

Патшалăх паян пĕчĕк бизнеса çул парать, кăткăс условисенче çăмăллăхлă кредитсемпе, субсидисемпе, налук каникулĕсемпе пулăшать. Адреслă пулăшу валли патшалăхăн предпринимательсем экономикăн хăш секторĕнче тимленине, вĕсен кадр ресурсне, пурлăхпа техника базине, инвестици майĕсене, вĕсене мĕнле йывăрлăхсем чăрмантарнине пĕлмелле.

Анлă сăнава тĕпе хурса кăна ку тытăма эффективлă планлама, предпринимательствăна аталанма пулăшакан программăсем йышăнма, тĕрĕс утăмсем тума пулать.

**– Тĕпчеве камсем хутшăннă?**

– Сăнав уйрăм предпринимательсене, пĕчĕк предприятисене тата микропредприятисене пырса тивнĕ. 2020 çулта организацисем е уйрăм предпринимательсем ĕçлемен пулин те вĕсен тĕпчеве обязательнăй йĕркепе хутшăнмалла пулнă.

**– Сăнав вăхăтĕнче мĕнле çĕнĕлĕхсемпе усă курнă?**

– Бизнесменсем – ĕçлĕ çынсем. Паянхи телекоммуникаци технологийĕсем вара отчета офисран тухмасăрах хăвăрт пама май уçаççĕ. Экономика переписĕ вăхăтĕнче респондентсен 60 проценчĕ хăйсем пирки сведенисене электронлă мелпе (web-сбор) е специализациленĕ çыхăну операторĕсене пĕлтернĕ. Ыттисем даннăйсене хут формăпа хăйсем е почта урлă çитернĕ.

Тĕп уйрăмлăх – «Госуслуги» портал урлă бизнес пирки сведенисене пĕрремĕш хут пуçтарни. Чăваш Республикинче респондентсен 7 проценчĕ çак çĕнĕлĕхпе усă курнă, ытларахăшĕ – уйрăм предпринимательсем.

**– Тĕпчев мĕнле кăтартусене уçса пачĕ?**

– Хальхи вăхăтра малтанхи пĕтĕмлетӳсем кăна паллă. Чăваш енре экономика переписьне 12 пин ытла пĕчĕк тата микропредприяти, 24 пине яхăн уйрăм предприниматель хутшăннă.

Уйрăм предпринимательсем патĕнче ĕçченсем, партнерсем тата пулăшакан çемье членĕсем 25 пин çын тăрăшни паллă. Вĕсем тунă тупăш 93 миллиард ытла тенкĕпе танлашнă.

Пĕчĕк тата микропредприятисенче 78 пине яхăн çын ĕçлени паллă. Инвестицисем 12 миллиард тенкĕпе танлашнă, вĕсенчен çурри ытларахăшĕ – пурăнмалли çуртсем тата производство пӳлĕмĕсем. Пĕрре тăваттăмĕш пайĕнчен сахалрах – машинăсем тата оборудовани.

**– Тулли результатсемпе хăçан паллашма май пулĕ-ха?**


Yandex.ru сайтран.

– Анлă сăнавăн пĕтĕмлетӳллĕ информацине Росстат сайтĕнче 2022 çулхи июльте вырнаçтарĕç. Цифрăсене регионсем, районсем тата хуласем тăрăх пайлаççĕ.